Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

104 (7529) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи декабрĕн (раштав) 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ĕçре малтисем



## Тупăш ӳсĕмĕ ĕçлеме хавхалантарать

Хурт-хăмăр ĕçĕ пысăк тупăш паракан отрасльсенчен пĕри. Ӳсĕм çăлкуçĕ вара кăткăс ĕç-хĕле тĕрĕс йĕркеленинчен нумай килет пулĕ. Ку тĕлĕшпе Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăх утарçи Ираида Семеновна Михайлова **(сăн ӳкерчĕкре)** пирки ырăпа асăнма пулать, мĕншĕн тесен пысăк тупăш илессишĕн вăл нумай тăрăшать, ĕçпе çирĕплетет. Ăста утарçă вăй хунăран пĕр çемье пуçне тивекен продукци калăпăшĕ кăçал 29,42 килогрампа танлашрĕ. Иртнĕ çул вара пĕр çемье пуçне 21 килограмм пыл илнĕччĕ, ку кăтарту районта чи пысăкки пулнă.

Утарта "Приокский" ăратлă хурт-хăмăрпа ĕçлеççĕ, вĕллесен йышĕ 55 çемьепе танлашать. Халĕ вĕсене юсав ĕçĕ ирттернĕ омшанике вырнаçтарса лартнă ĕнтĕ.

Ираида Семеновнашăн хурт-хăмăрпа аппаланасси пĕрре те ют мар. Çакă унăн чун-чĕри кăмăллакан ĕç пулса тăрать. Мĕншĕн тесен çакăнпа вăл мĕн ачаранах паллашнă, утарçă ăсталăхне хăнăхса пынă. Çавăнпа та хушма хуçалăх тата ял хуçалăх утарĕсенче япăх мар ĕçлесе, ĕлкĕрсе пырать.

Малтанхи çулсенче вăл ашшĕн пулăшуçи пулнă, халĕ вара иккĕмĕш çул ĕнтĕ утарти ĕç ун çине тиеннĕ. Пĕччен нумай çул ĕçлемест пулин те, хурт-хăмăр ăсти малтисен ретĕнче.

– Хуçалăх ертӳçипе специалисчĕсем утар ĕçне вырăна хуни, тимлĕх уйăрни сисĕнет. Вăл е ку хатĕрсемпе препаратсене май пур таран туянса пама тăрăшаççĕ. Вĕсен пулăшăвĕ малалла та тупăш ӳсĕмĕ çине витĕм кӳрессе шанас килет", – терĕ ăста утарçă ĕç кăтартăвĕ лайăххисен шутĕнче пулнăран.

**Хамăр инф.**

Республика кунне хатĕрленсе

## Хатĕрленӳ ĕçĕсене хăвăртлатмалла

Кăçалхи октябрĕн 10-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров 2008 çулта Республика кунне пирĕн районта ирттерме Указ йышăнни çинчен районта пурăнакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю. А. Ивановăн йышăнăвĕпе чăвашсен çак пысăк уявне тĕплĕн хатĕрленсе ирттерме ятарлă комисси йĕркеленĕ. Çавăн пекех Республика кунне хатĕрленсе ирттермелли мероприятисен планне те çирĕплетнĕ.

Ĕнер район пуçлăхĕ, асăннă комисси председателĕ Ю.А. Иванов асăннă комиссин пĕрремĕш ларăвне ирттерчĕ. Çак таранччен мĕн тунă Республика кунне хатĕрленсе? Тĕпрен илсен, çак ыйту тавра пулчĕ унта калаçу.

Асăнса хăвармалла, Республика кунне çитес çул район центрĕнче çеç мар, ытти ял тăрăхĕсенче те ирттерме палăртнă. Çак чыса камсем çĕнсе илнине палăртма ял тăрăхĕсем хушшинче конкурс йĕркеленĕ. Пĕтĕмпе комиссие 8 ял тăрăхĕ уява хăйсем патĕнче ирттерме заявкăсемпе материалсем тăратнă. Район пуçлăхĕ конкурса тăратнă материалсем тивĕçлĕ шайра маррине, ял тăрăхĕсем ку енĕпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

Территорие хăт кĕртессипе предприятисемпе организацисем хушшинче йĕркеленĕ конкурс малалла пырать. Кунта картасене юсаса çĕнетессипе пĕрлех çуртсене архитектура сĕмĕ кĕртесси те, йĕри-тавра йывăçсем, чечексем лартасси те кĕрет. Çакна валли укçа-тенкĕ те сахал мар кирлĕ пулать. Предприятисемпе организацисен çеç мар, аякра пурăнакан ентешсен пулăшăвĕ те ытлашши пулмĕ кунта.

Кашни ялти кашни çемье уява хатĕрленсе ирттерес ĕçе хутшăнмаллине ăнланасса та шанас килет. Пирĕн кил-картана, урама, хамăр пахчасене хамăрсăр пуçне никам та килсе йĕркелесе памĕ.

Уяв кунĕнче вара районта чылай çĕнĕ объектсем хута каймалла. Муркашри физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплекс та çак кун хăйĕн алăкĕсене яриех уçĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕсем унта халĕ малалла пыраççĕ. Çурт хыçĕнчи пĕвене тасатса хăт кĕртессипе те хатĕрленӳ ĕçĕсем пуçланнă.

Район центрĕнчи нумай хватерлĕ çуртсем вырнаçнă картишсенче ача-пăча площадкисем тума хатĕрленеççĕ. Материалсемпе "Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан" компани тивĕçтерет, площадкăсене хваттерте пурăнакансем хăйсем тăваççĕ.

Республика шайĕнчи çулсене çĕнетсе уяв кунне хута яма палăртнă. Çавăн пекех Муркашри нумай хваттерлĕ çуртсем патне пыракан, Çĕньял Муркаша кĕрекен çулсене туса пĕтересси те çирĕппĕн пурнăçланмалла. Шетмĕпуçĕнче пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ хута каймалла тата ытти те.

Ларура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çакна палăртрĕ.

– Муркаш, Уйкас Янасал, Шетмĕпуç ял тăрăхĕсенче Республика кунне ирттересси паллă. Уява хатĕрленес ĕçе палăрмаллах хăвăртлатмалла. Районти Культура çуртне реконструкцилессипе, моделлĕ клуб уçассипе тата ыттипе çыхăннă ыйтусемпе те çине тăрсах ĕçлемелле.

**Л. ПАВЛОВА.**

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне

## Районăн 2008 çулхи бюджечĕ. Акă мĕнле вăл

***Çулталăк вĕçленсе пырать. Çак вăхăтра кашни çулах районăн çитсе килекен çулталăкăн бюджетне йышăнаççĕ. Районăн 2008 çулхи бюджетне депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 22-мĕш ларăвĕнче ноябрĕн 30-мĕшĕнче йышăнчĕç. Шăпах районăн çитес çулхи бюджечĕпе тĕплĕнрех паллаштарма ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн финанс пайĕн ертӳçинчен Р.И. АНАНЬЕВАРАН.***

**– Рената Иосифовна, чи малтанах район бюджечĕн тупăш пайĕ çинче чарăнар-ха. Мĕнрен пуçтарăнать вăл тата пĕтĕмĕшле мĕн чухлĕ пулать?**

– Район бюджечĕн тупăш пайĕ налук пуçтарса тунă тупăшран тата налук мар тупăшсенчен, предпринимательство ĕçĕнчи тупăшсемпе урăх шайри бюджетсенчен килекен тавăрса памалла мар укçа-тенкĕрен тăрать. Налук пуçтарса тунă тата налук мар тупăш мĕнле пулассине вара районта паян вăйра тăракан налуксемпе пухусем çинчен калакан нормативлă право акчĕсене тĕпе хурса палăртнă. Çавăн пекех Чăваш Республикин "Республикăн 2008 çулхи бюджечĕ тата 2009-2010 çулсенчи план тапхăрĕ çинчен" саккунĕпе килĕшӳллĕн федераци тата республика шайĕнчи налуксенчен уйăрса паракан суммăн нормативĕсен улшăнăвне те шута илнĕ.

Çапла вара районăн 2008 çулхи бюджечĕн тупăш пайĕ, урăх шайри бюджетсенчен килекен тавăрса памалла мар суммăсене шута илмесĕр, 65064,5 пин тенкĕпе танлашать. Ку вăл кăçалхинчен 23 процент чухлĕ нумайрах. Çав шутран налук пуçтарса тунă тупăш 45413,2 пин тенкĕ (2007 çулхинчен 30 процент нумайрах), налук мар тупăш 3930,0 пин тенкĕ (21 процент ытларах), предпринимательство ĕçĕнчен е тупăш кӳрекен ытти ĕçсенчен пуçтарăнакан тупăш 15721,3 пин тенкĕ (кăçалхи шайрах).

Район бюджечĕн тупăш пайĕ ӳсни куç кĕрет: уйрăм çынсен тупăшĕнчен, пĕтĕмĕшле тупăшран илекен налук пайĕсем те ӳссех пыраççĕ. Ку вара, акă, мĕн çинчен калать: пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăра ĕç вырăнĕсем ӳссе пыраççĕ, халăхăн тупăшĕ те пысăклансах пырать. Район бюджечĕн хамăр тунă тупăшăн 70 проценчĕ налук пуçтарса тунă тупăш пулать, 6 проценчĕ – налук мар тупăшсем, тепĕр 24 проценчĕ районти бюджет организацийĕсен предпринимательство ĕçĕнчен илнĕ тупăш.

**– Рената Иосифовна, район бюджетне ытти шайри бюджетсенчен çитес çул мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăраççĕ?**

– 2008 çулта район бюджетне пурĕ 268 456,9 пин тенкĕ килмелле тесе шутлатпăр. Асăннă суммăран 133 078,2 пин тенки – район бюджетне республикăн компенсаци фондĕнчен тĕллевлĕ уйăракан сумма, муниципаллă районсене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пулăшма йĕркеленĕ республика фондĕнчен килмелли сумма – 83435,0 пин тенкĕ, бюджетсене шайлаштаракан фондран – 14966,5 пин тенкĕ тата социаллă тăкаксене саплаштарма пулăшакан фондран - 35012,9 пин тенкĕ. Кунсăр пуçне ытти шайри бюджетсенчен тавăрса памалла мар укçа-тенкĕ 1964,3 пин тенкĕ килмелле.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

Выранти суйлав итогĕсем

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсене суйлассипе ирттернĕ хушма суйлав итогĕсем**

**1 № Октябрь суйлав округĕпе**

Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ 937

Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ 752

Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ 19

Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ 41

Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ 730

**Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ**

Кузнецов Юрий Александрович 393

Скворцова Роза Владимировна 237

Соловьев Алексей Юрьевич 100

Сасăлама 771 суйлавçă хутшăннă, суйлавçăсен 82,28 проценчĕ.

ЧР "Чăваш Республикинче выранти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен" саккунăн 48 ст. 2 пункчĕпе Кузнецов Ю.А. ытларах сасă пухса 1 № Октябрь округĕпе депутата суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев.**
**Секретарĕ В.К. Сорокина.**

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсене суйлассипе ирттернĕ хушма суйлав итогĕсем**

**7 № Мăн Тутаркас суйлав округĕпе**

Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ 943

Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ 600

Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ 67

Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ 28

Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ 639

**Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ**

Воробьев Петр Васильевич 274

Николаев Владимир Иванович 161

Семенов Игорь Вячеславович 159

Чебенов Решит Халиуллович 45

Сасăлама 667 суйлавçă хутшăннă, суйлавçăсен 70,73 проценчĕ.

ЧР "Чăваш Республикинче выранти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен" саккунăн 48 ст. 2 пункчĕпе Воробьев П.В. ытларах сасă пухса 7 № Мăн Тутаркас суйлав округĕпе депутата суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев.**
**Секретарĕ В.К. Сорокина.**

Республикăра

## Шупашкарта Президент библиотекин филиалĕ пулĕ

Ытлари кун ЧР Президенчĕ Николай Федоров Шупашкарта Наци библиотекин никĕсĕ çинче Б. Ельцин ячĕллĕ Президент библиотекин регионти центрне-филиалне йĕркелес ыйтупа ĕçлĕ канашлу ирттернĕ. Вăл федерацин Атăлçи округĕнче пĕрре пулĕ. Канашлăва Сергей Гапликов премьер-министр, ЧР Финанс, Экономика, Культура министерствисен ĕçченĕсем, экспертсем хутшăннă.

Президент библиотекине йĕркелесси пирки Владимир Путин кăçалхи нарăс уйăхĕнче хушу кăларнă. Ака уйăхĕнче Федераци Пухăвне янă Çырăвĕнче ăна Çĕршывăн пĕрремĕш Президенчĕн Борис Ельцинăн ятне пама сĕннĕ. Б.Н. Ельцин ячĕллĕ библиотека тăвас ĕçĕн йĕркелӳ комитетне Раççей Президенчĕн ĕçĕн управляющийĕ Владимир Кожин ертсе пырать. Вăл хальхи вăхăтра вулавăшăн регионти центрĕсене-филиалĕсене йĕркелес тĕлĕшпе уйрăмах хастар ĕçлет. Чăваш Республикин Наци библиотеки чылай енĕпе çĕнтернĕ. Шăпах вăл çĕршывăн тĕп библиотекин федерацин Атăлçи округĕнчи регионти центрĕ пулĕ. Çакăн пек йышăну тума çĕршыв пуçлăхĕ кăçалхи авăн уйăхĕнче килсе кайни те витĕм кӳнĕ. Ун чухне Владимир Путин Чăваш Енĕн социаллă пурнăçĕпе тата экономикипе паллашнă, республика территорийĕнче наци проекчĕсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине курса ĕненнĕ. Ун чухнех Николай Федоров Раççей Президентне Владимир Путина Чăваш Ен 500 тĕслĕх библиотекăран тăракан тытăма йĕркелес тĕлĕшпе пуçтарăннă опытпа паллаштарнă. Асăннă тытăма Президент библиотекипе çыхăнтарас енĕпе сĕнӳ панă. Владимир Путин: "Пĕрле ĕçлĕпĕр", – тесе хуравланă.

**ЧР ПА пресс-службi.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн ноябрĕн 14-мĕшĕнчи 523 № йышăнăвĕпе райадминистрацин Хисеп грамотипе наградăланă

Çамрăк ăрăва пĕлӳ тата воспитани парас ĕçри ӳсĕмсемшĕн:

**Юрий Алексеевич ГЕРАСИМОВА**, Турай шкулĕн директорне.

**Валентин Валентинович НИКИФОРОВА**, Турай шкулĕн хими учительне.

**Оксана Модестовна ПЕТРОВАНА,** Турай шкулĕн пуçламăш классен учительне.

Оперативла служба ĕçĕнчи ӳсĕмсемшĕн:

**Николай Владимирович АЛЕКСАНДРОВА**, кĕçĕн инспектора.

**Юрий Анатольевич ДЕДОВА**, ППС взвочĕн милиционерне.

**Геннадий Владимирович КРАСНОВА,** ППС взвочĕн командирне.

**Виктор Климентьевич ЛЕОНИДОВА**, участковăй уполномоченнăйне.

**Любовь Геннадьевна ПЛЕЧОВАНА**, аслă инспектора.

**Григорий Ильич ХРИСТОФОРОВА**, хуралпа конвой уйрăмĕн милиционерне.

Ăçта туянма кăмăл тăватăр

## Пасарти хаксем (декабрĕн 7-мĕшĕ)

| | Муркашра (тенкĕпе) | Мăн Сĕнтĕрте (тенкĕпе) |
|---|---|---|
| Сысна ашĕ (1кг) | – | 90-130 |
| Ĕне ашĕ (1кг) | 100 | 90-120 |
| Пăру ашĕ (1кг) | – | 100-130 |
| Сурăх ашĕ (1кг) | 120 | 110-120 |
| Хур ашĕ (1шт.) | 550-650 | 600-700 |
| Кăвакал ашĕ (1шт.) | 350 | 300-400 |
| Индоутка ашĕ (1 шт.) | – | 150-250 |
| Чăх ашĕ (бройлер) (1шт.) | – | 300 |
| Ĕне çăвĕ (1кг) | 80 | 70-80 |
| Шăратни | 90 | 90 |
| Сĕт (1,5л) | 25 | 25-30 |
| Тăпăрчă (1кг) | 60 | 60-70 |
| Çăмарта (10шт.) | 30-35 | 30-35 |
| Пан улми (1кг) | 15 | 15 |
| Мăйăр (1 стаканĕ) | 12 | 10-12 |
| Пыл (1кг) | 130-140 | 120-150 |
| Çăматă (килте йăвалани) | 600-700 | 600-650 |
| Çăм (таптарни) | 150-200 | 200 |
| Йĕке | 20 | 15 |
| Арланă çип (1кг) | 300 | 300 |

Шутлă кунсем юлчĕç

## Район хаçатне малалла çырăнтараççĕ

**Хаклă вулаканăм! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**